Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен,
информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви

Чăваш Республикин Наци библиотеки

Ăслăлăхпа тĕпчев тата меслетлĕх пайĕ

# «Малалла-ха пурнăç, малалла...»

П.П. Хусанкай çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май литература каçĕн сценарийĕ

Шупашкар
2006

ББК 78.381.9:83.3(2РОС=Чув)
М 18

Редакци совечĕ: М.В. Андрюшкина
Р.Н. Глухова
Г.П. Соловьева
Н.Т. Егорова

Кăларăмшăн яваплă: Р.Н. Глухова

«Малалла-ха пурнăç, малалла…» : П. П. Хусанкай çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май литература каçĕн сценарийĕ / Чăваш Республикин Наци библиотеки ; хатĕрлекенĕ А. В. Васильева. – Шупашкар, 2006. – 16 с.

Компьютерпа пичетлекенĕ: А.В. Васильева
Версткăлаканĕ: Е.Н. Федотова

© Чăваш Республикин Наци библиотеки, 2006

*Малалла-ха пурнăç, малалла.*
*Эп пăртак чăваш ятне çĕклесшĕн*
*Хунавра эп тивĕç пиçĕхмешкĕн,*
*Малалла-ха пурнăç, малалла...*
П.П. Хусанкай

Хăтлă пӳлĕмре паллă поэт пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан кĕнеке выставки, стенд йĕркеленĕ. П. Хусанкай сăввипе çырнă «Çĕршывăмçăм» юрă хуллен янăрать. Литература касĕ П.П. Хусанкайăн «Малалла-ха пурнăç, малалла...» сăввипе уçăлать.(Ăна вулакан е ертсе пыракан илемлĕ каласа парĕ).

<u>Хутшăнакансем:</u>
– *1-мĕш ертсе пыракан*
– *2-мĕш ертсе пыракан*
– *Поэт сăнарĕ*
– *Сăвă вулакансем*

**1 е. п.** Сывă-и, хаклă хăнасем, хисеплĕ тус-тантăшсем, ырă çыннăмăрсем! Чупатăр-и, çӳретĕр-и, пирĕнпе пĕрле пулма кăмăл тăватăр-и? Апла пулсан, уява пуçлама та вăхăт. Паян пирĕн республика пурнăçĕнче питех те паллă кун – чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ Петр Петрович Хусанкай çуралнăранпа 100 çул çитрĕ. Поэт хăйĕн ĕçне-хĕлне, пултарулăхне тивĕçлипе хакласа, хăйне çуратнă халăха халаллانă сăввинче çапла çырать:

Хăй ирĕкĕ, хăй кăмăлĕ: эп – унăн,
Мĕскер тума пултарнине эп тунă.

Чăннипех те, унăн поэзийĕ тĕрлĕ енлĕ те пуян. Чăвашсен кăмăл-туйăмне, шухăш-ĕмĕтне поэт ытарлă та сăнарлă сăмахпа тĕнчери чылай çĕр-шыв çыннисен чĕрисем патне çитернĕ.

**2 е. п.** Петр Петрович Хусанкай 1907 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче Тутар Республикинчи Элкел районне кĕрекен Сиктĕрме ялĕнче чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă.

Сиктĕрме! Нумай сиктертĕн
Ешĕл симĕс сăпкунта.
Малтанхи хавасăм, тертĕм,
Хура-шурăм – йăлт кунта.

Сиктĕрме – Хусанкайăн тăван ялĕ. Çак ял аслă çул–йĕрсенчен инçетре, хӳтлĕ вырăнта ларнă. Çывăхра пысăк юханшывсем те, чугун çул тавраш ĕ те пулман. «Вунултă çула çитиччен эпĕ хула та, пăрахут та, пăравус та курман», – аса илет поэт. Чаплă поэтăн литературăпа обществăри пархатарлă ĕçĕсене хисеплесе, вăл çуралнă яла Хусанкай ятне панă.

П. Хусанкай ачаран тăлăх ӳснĕ: пĕчĕкле ашшĕсĕр тăрса юлнă та амăшĕпе кăна пурăннă. Ĕçчен те ăслă чăваш хĕрарăмĕ пулнă унăн амăшĕ. Вăл ăна ăспа та, ĕçпе те тăван халăхшăн пурăнма хăнăхтарса пынă. «Анне» сăвăра поэт хăйшĕн такамран та хаклă çыннине акă епле ăшшăн асăнать:

**1–мĕш сăвă вулакан:**

Сётелĕм тĕлĕнче яланлăх юлтăн.
Пуçу тавра анатрилле сурпан.
Художника тав турăн та ыр сунтăн:
«Хам пек пуль, – терĕн, – ватă, – ватă, ав, куран...»
Суха касси пек тарăн пĕркеленчĕк,
Çат тытнă тутуна яланхи пек,
Ик куç харши хушши раснах йĕрленчĕ, –
Унта пайтах пытарăннă инкек.

**1 е. п.** Поэт каланă тăрăх, илемлĕх ăнкарăвне, ырă кăмăл туртăмне унра чи малтан амăшĕ вăратнă. Амăшне халалласа поэт ăшă та салху туйăм витернĕ нумай сăвă кĕвĕленĕ. Унăн сăнарĕнче сăвăç «пĕр пĕтĕм сăн» – чăвашăн амăшне курнă.

**2-мĕш сăвă вулакан**:

Сăпка юррипеле чĕлхе упранă,
Вăйăсенче, туйра та юпара
Пĕр савăнса, пĕр хурланса юрланă
Пин-пин анне пекех эс асăмра.
Калас килет сана: пур пек вăл та,
Чуна та – халăха эп пехиллем.
Тайма пуçа çĕре çитех таятăп,
Чĕлхемĕн амăшĕ, чăваш аннем!

*(«Анне», 1961)*

**2 е. п.** Тăван чĕлхене юратма, хăй вăйне поэзире тĕрĕслеме сăвăçа «Нарспи» поэма хистенĕ. Ăна вăл хăйсем патĕнче хваттерте пурăнакан вĕренекенсенчен шкул çулне çитиччѐнех илтнĕ. Петĕр сакăр çула çитсен ялти шкула вĕренме кайнă. Ача чухнех вăл халăх юмах-халапне, сăвви-юррине итлеме юратнă, вĕсен илемĕпе киленнĕ, хăй те юрланă. П. Хусанкай тăван халăх юрăçи-сăвăçисен пултарулăхĕпе çеç мар, вырăс литературин иксĕлми пуянлăхĕпе те паллашнă. Унтан та ытларах, ачаллах хăй те сăвă çырма тытăннă. Мĕн пĕчĕкрен чăваш халăх сăмахлăхне ăша хывнă вăл.

**1 е. п.** Чăваш юррисене чаплă поэтăмăр чылай пĕлнĕ. Ĕçкĕ-çикĕре ялан тенĕ пекех «Атăл леш енче», «Пуç ыратать пуçана» юрăсене хăйне майлă, илемлĕ, пысăк туйăмпа, уçă та хитре сасăпа юрланă. Çавăнпах пулĕ вăл çырса пичетленĕ сăвăсем тăван халăхăмăрăн çепĕç те илемлĕ юррисемпе пĕр пекрех кĕвĕллĕ, тарăн шухăшлă, хитре çемĕллĕ. «Ирĕк тимĕрçĕ», «Хĕр йĕрри», «Авалхи туй», «Вăрман тăрăх», «Кĕтрĕм, кĕтрĕм эп сана, савниçĕм...», «Чăваш тĕрри», «Кĕслеçĕ» т. ыт. те. «Хура пĕркенчĕк», «Мерчен тумлам», «Тилли юррисем» – поэт хăй каларăш, веçех тăван халăхăн юрăри хăвачĕпе витерĕннĕ чаплă хайлавсем. Е тата унăн кайрантарах çапăннă сăввисене аса илĕпĕр – «Сăпка юрри», «Савăш курки», «Çĕнтерӳ юрри»... Сăвă хыççăн сăвă, юрă хыççăн çĕнĕ юрă. Чăваш ачисене уйрăмах «Сĕм вăрманĕ...» юрă кăмăла кайнă: вăл «Аптраман тавраш» сăвăлла романа ним улшăнмасăрах кĕрсе вырнаçнă вăйлă та чаплă сăвă:

*(Асăннă юрра хăнасене итлеттерсен аван пулмалла)*

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,

Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш.

Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан çапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш.

Ăшă çумăр чаш та чаш,
Ӳс калчам, çĕклен эс яш,
Çӳлерен çӳле кармаш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

**2 е. п.** Поэтăн пĕтĕм пурнăçĕ унăн пултарулăхĕнче курăнать. Тĕрлĕ поэтăн тĕрлĕ шăпа. Пĕри сахал пурăнса та нумай çырма ĕлкĕрет, тепри нумай пурăнса та нимĕнех туса ĕлкĕреймест. Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн пурнăçĕ вăрăмах пулмарĕ, çапах та вăл нумай çырса хăварма ĕлкĕрчĕ – вырăсла та, чăвашла та.

П. Хусанкай чĕлхе, сăмах вăйĕ çинчен «Чĕре юрри» поэмăра, кĕскен çеç пулин те, çакăн пек каланă:

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп: сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳкнине те пулать çĕклеме...

**1 е. п.** 1924 çулта Шупашкарта «Сунтал» журнал тухма тытăннă. Унăн малтанхи кĕнекинче çамрăк сăвăçăн виçĕ сăвви çапăннă. Çакăнтан пуçланнă чăваш поэчĕн – Петĕр Хусанкайăн чăваш çырулăхĕнчи вăрăм çулĕ. Чăваш халăхĕн çĕнĕ сăвăçĕ çуралнă. Хусанкай – ăçтан тупнă вăл çак ята? Кун пирки поэт «Раççейĕм» сăвăра акă мĕн çырать:

**3-мĕш сăвă вулакан:**

Пур, тетчĕç, эп астăвасса,
Пĕр пĕчĕкçĕ вырăс ялĕ;
Унăн улпутне те асăнатчĕç,
Вăл пулнă имĕш Арăстух...
Пуçтах чăваш, тĕнче ухтармăш,
Çитсе кĕрет те Хусана,
Вăрах тăрать-и вăл, сахал-и
Телейлĕ-и, телейсĕр-и –
Вăлтса илет çав пикене,
Çав Арăстух çыннин хĕрне,
Килет унпа чăваш ялне.
«Хусан çынни» те «хусансем»
Тее пуçлаççĕ хайхине.
Хушаматланнă та вара вăл
Çырма тапратнă вырăсла:
Казанковсен рати пуçланнă,
Кайран вăл тулнă çур яла.
Эп, хамăр Çеçпĕл калашле,

«Чăваш тĕнче çывхарнă чух»
Çав вырăсла хушамата
Чăвашлатмашкăн шухăш тытрăм.

**2 е. п.** «Эпĕ пĕтĕм чунпа лирик». Çапла каланă Хусанкай хăйĕн ĕçне хакланă майăн. Вăл пултаруллă лирик пулнине сăвăсем кăна мар, унăн пысăк калăплă произведенийĕсем те аван кăтартаççĕ. Хусанкай чылай поэма çырнă: «Çирĕм улттă» (1930), «Магнитту» (1933), «Байрон» (1932), «Улмуççиллĕ Тĕрлемес» (1933), «Басмач» (1928-1934), «Ямкас юмахĕ» (1934), «Шелепи Шерепи» (1930), «Таня» (1942), «Çĕнтерӳ юрри» (1945), «Сăмах хăвачĕ» (1950-1951), «Тури Вылта туй сикет» (1950-1951), «Çуллахи талăк» (1951), «Çӳлелле» (1962), «Çĕрте те çĕрместпĕр» (1967), «Аслă чĕре» (1960), «Горкăри çурт» (1951-1952). Унăн поэмисен шутне ĕлĕкхипе хальхи чăваш юрăçин шăпине кăтартакан икĕ ярăма – «Тилли юррисем» (1933-1940) тата «Инçе вĕçев» (1963-1964) кĕнекесене кĕртме тивĕç. Вĕсем пурте Хусанкайăн паллă тапхăрĕпе çыхăннă.

**1 е. п.** Сăмах май, çакна палăртса хăвармалла: Петĕр Хусанкайшăн вырăс поэзийĕ ялан ырă тĕслĕх пулнă.

**Поэт сăмахĕ:** «Чăваш прозипе поэзийĕ реализмла вырăс литературин лайăх традицийĕсене кура аталаннă, унăн халăхлăхне асра упранă. Поэт майăн, эпĕ Хĕвел тухăçпа Хĕвел анăç поэзинче, Саадипе Омар Хаямран пуçласа Гетепе Байрон таран, хама килĕшекен япала нумай тупатăп, ăна юратса вулатăп, анчах вырăс поэчĕсене тата хытăрах юрататăп. Тăван халăх чунне, унăн ĕмĕтне Пушкинпа Лермонтов пек вăйлă уçса парăттăм, вырăс поэчĕ Есенин пек чăваш поэчĕ пулăттăм, Маяковский пек революцилле пафоспа гражданлăха тарăн лирикăпа çăмăллăн çыхăнтарса çырма вĕренĕттĕм. Çапла манăн ĕмĕтĕм».

**2 е. п.** Чăваш халăх поэчĕ вырăс поэзийĕпе, тăванла совет тата тĕнче литературин чи лайăх произведенийĕсемпе чăваш вулаканне паллаштарас енĕпе те нумай ĕçленĕ. Вăл А. Пушкинăн произведенийĕсене («Евгений Онегин», «Полтава», «Палăк»), А. Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедине, В. Маяковскин сăввисемпе поэмине («Пĕтĕм сасăпа»), В. Шекспирăн «Ромеопа Джульетта» трагедине, Т. Шевченкон, Н. Тихоновăн, А. Прокофьевăн – пурĕ 38 вырăс поэчĕн, Совет Союзĕнчи ытти тăванла халăхсен 53 поэчĕн, чикĕ леш енчи тĕрлĕ çĕршывсенчи 89 поэтăн 500 яхăн произведенине чăвашла е вырăсла куçарса пичетленĕ. Поэт çырнă сăвăсем, поэмăсем, статьясем 57 тĕрлĕ чĕлхепе кун çути курнă. Вырăсла унăн 26 кĕнеке тухнă.

**1 е. п.** Чăваш литературине аталантарас енĕпе тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн П. Хусанкая 1950 çулта халăх поэчĕ ятне панă. «Аслă чĕре» поэмăшăн, Куба çинчен çырнă сăвăсен «Инçе вĕçев» ярăмĕшĕн, очерксемпе литература критики статйисен «Книга дружбы» ятлă пуххишĕн Петр Петрович 1967 çулта Чăваш Республикин К. В. Иванов ячĕллĕ патшалăх премине, 1969 çулта Çеçпĕл Мишши премине илме тивĕç пулнă.

Пăлхарпа совет халăхĕсен туслăхне çирĕплетме пулăшнăшăн Хусанкая вилнĕ хыççăн Болгари халăх премине парса сума сунă.

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн Культура керменне, Шупашкарти çĕнĕ урама, Çĕнĕ Шупашкарти библиотекăна П. Хусанкай ятне панă.

**2 е. п.** Чăваш сăвăçисемпе композиторĕсем П. Хусанкай çинчен нумай сăвă çырнă, юрă хывнă. Итлесе пăхар-ха В. Давыдов-Анатри çырнă «Хусанкай çинчен хунă юррине»:

*(Енчен те юрри алă айĕнче пулмасан, сăввине итлеттерсен аван пулĕччĕ )*

**1-мĕш сăвă вулакан:**

Хусанкай хăйĕн пĕтĕм вăйне,
Çăлтăр пек çуталан ăс-халне,
Пархатарлă хĕрӳ пурнăçне
Парнелерĕ чăваш халăхне.

Хусанкай тăван халăх ятне,
Илĕртӳллĕ чĕлхе илемне,
Ун сăваплă сӳнми хăватне
Илсе тухрĕ тĕнчемĕр умне.

Хусанкай пиллесе хăварни,
Унăн хаклă асамлă парни
Нихăçан тухас çук асăмран,–
Ăна уншăн тавах чун-вартан!

Хусанкай чунĕпе, ĕçĕпе,
Янăравлă сăвви-юррипе
Юлчĕ пирĕн пин-пин чĕрере,
Юлчĕ пирĕн асра ĕмĕре!

1 е. п.

Эпĕ те чăваш, эсĕ те чăваш,
Ман ял – Сиктĕрме, сан – Енĕш Нăрваш,
Юнпала – тăван, çывăх хурăнташ,
Чунпала пулар Аптраман тавраш...

Çакăн пек йĕркесем шăрçаланă хăй вăхăтĕнче Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай. Вĕсене, итлекен ăнланчĕ те пулĕ, поэт хăйĕн мăшăрне, Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш хĕрне, эпир паян пурте пĕлекен, юратакан, таланчĕпе киленекен Вера Кузьмина артисткăна халалланă. Поэтăн пĕтĕм пурнăçĕ ĕçпе кĕрешӳре иртнĕ тетпĕр пулин те, вăл та чĕрĕ Çын пулнă. Çумрах – мăшăрĕ, ывăлĕ. Вăл та юратнă, савăннă, хурланнă самантсем те пулнă, паллах. Çакна вара никам та мар, мăшăрĕ пуринчен те аванрах курса-туйса тăнă.

**2 е. п.** Тăван чĕлхе ăсти нихăçан та манăçа тухас çук. Вăл çырнă произведенисем халăхăмăра халĕ те, малашне те çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарса тăрĕç.

Паллашар-ха паллă çыравçăсем П. Хусанкай çинчен каланă шухăшсемпе.

__Г. Ефимов:__ «Хусанкай чаплă сăвăç çеç мар, мухтавлă çул-çӳревçĕ те. Вăл тĕнче тăрăх çӳресе ытти халăхсен культурине чĕрине илсе пуянлатнă. Çавăнпа унăн поэзийĕ хăватлă. Хусанкай çăлтăр пек. Çăлтăр сӳнсен те, çути пин çул хушши çаплах çĕр çине килет».

**1 е. п.** __Г. Айги__: «П. Хусанкай, Петĕр пичче.. – эпĕ ăна яланах поэзири хамăн пĕрремĕш Вĕрентекен пек ырăпа, тав туса аса илетĕп. Пысăк культурăллă поэт, виçене çав тери вăйлă туйнă, Верлен кĕвĕлĕхне чуна илнĕ, Хусанкай чăваш литературине Европа поэзийĕн жанрĕпе формине нумайăшне кĕртнĕ, хăйĕн лирикинче чи çӳллĕ шая çитернĕ.

«Хусанкайра пĕтĕмпех пур», – тетĕп эпĕ яланах. Илемлĕ лирика, эпосла поэзи, поэтикăн пур сферине те хăйне май çĕнĕлĕх кĕртме тăрăшни (ытларах модернистла

шухăшсем), фольклор тексчĕсене якатни, вĕсене тĕнче литературин шедеврĕсен шайне çитерни, халăх шухăшлавĕпе çыхăннă тĕп темăсене палăртса вĕсемпе ĕçлени – çакă пĕтĕмпех унăн пултарулăхне Александр Пушкинпа Адам Мицкевичăн витĕмлĕ нумай енлĕ сĕмне парать».

2 е. п. <u>Ник. Иванов</u>*:* «Эпĕ П. Хусанкай пек тăрăшуллă, ялан ĕçе кӳлĕннĕ сăвăç чăвашра тепре пуррине курмастăп. Пин-пин сăвă, пин-пин куçару (вырăсларан, пăлхарларан, украинларан, тутарларан), пин-пин çыру (Н. Тихонова, Ян. Судрабкална, Юсуп Хаппалаева, Заки Нурие, М. Рыльские, П. Тычинăна, Мĕтри Ваçлейне, Я. Ухсая, А. Талвире тата нумай-нумай çынна), рецензисемпе докладсем, статьясемпе калаçусем... Ăçтан кăна вăхăт тупнă, ăçтан кăна хăват çитернĕ вăл».

1 е. п. П. Хусанкай çырăвĕсене, ун çинчен çырнă аса-илӳсене вуласан, çакăн пек ыйту сиксе тухать: хамăр Тăван çĕршывăн хăш кĕтесне тата мĕнле кăна урăх çĕршыва çитсе курман-ши Петр Петрович хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшĕнче?

Вăл пĕрремĕш пилĕкçуллăх тапхăрĕсенчех çул çӳреме юратнă. Хĕвеллĕ кăнтăрти, Урал таврашĕнчи, Кавказри тата ытти çĕрсенчи малтанхи стройкăсенче, çĕнелекен ялсемпе хуласенче пулса, унти халăхсене чăваш литературипе, хăйĕн сăвви-юррисемпе паллаштарнă. Поэт курса çеç çӳремен. Тăван çĕршыв тăрăх çӳрени ăна тата та тăрăшса ĕçлеме хавхалантарнă. Çул çӳренĕ чух е киле таврăнсан, поэт курни-илтни, хăйĕн кăмăлне мĕн хумхантарни çинчен лирикăлла сăвăсем те, поэмăсем те çырнă. «Бакуран «Çирĕм улттă» поэмăпа хавхаланса таврăнтăм», – тет вăл хăйĕн «Кĕске автобиографийĕнче».

Ăçта кайсан та, ăçта çитсен те П. Хусанкай халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕллевпе нумай ĕçленĕ. Вăл тăванла халăхсене чăваш литературин паха тĕслĕхĕсемпе паллаштарас тесе нумай вăй хунă.

2 е. п. Карели поэчĕ А. Тимонен П. Хусанкай çинчен çапла çырнă: «Сăнран лăпкă та шухăшлă Петĕр Хусанкай – питĕ канăçсăр çын. Вăл çур тĕнче тавра çаврăннă: çуран утнă, тĕвепе, ашакпа, автомашинăпа, поездпа çӳренĕ, самолетпа вĕçнĕ. Вăл хăйĕн куçĕпе Вăтам Азие, Кавказа, Украинăна, Латвие, Польшăна, Румыние, Чехословакие, Кубăна, Болгарие курнă... Ăçта кăна çӳремен-тĕр вăл, мĕнле çĕршыв çинчен кăна сăвă хывмантăр», – тенĕ.

1 е. п. <u>Митта Ваçлейĕ</u>:

Сана асăнсан, ялан пĕр сăмах:
«Чăваш тухйинчи чи пысăк ахах».
Анчах эп каласшăн: «Петĕр Питравĕ
Ахах кăна мар – пуянлăх утравĕ».

2 е. п. Петĕр Хусанкая, халăх юрăçине, вăрçă ветеранне, мир салтакне çур ĕмĕре яхăн лăш канмасăр ĕçленĕ поэт-гражданина, мĕнпе, кампа танлаштарма пулать-ши?

«Пирĕн атте – ват юман» тенĕ чăваш халăхĕ хăйĕн пĕр юрринче. Хусанкай 1953 çулта çырнă «Атăл хĕрринчи юман» сăввинче: «Эс, халăхăм, çав юман пек мар-и?» – тесе ыйтать те, ăна, хăй çинчен виç йĕрке каласа, вĕçлет:

Манра – йăлт эс пани: ĕçченлĕх, чыслăх,
Хаваслăх, хурланса та илкелӳ...
Юман-аттем! Эп сан йĕкелӳ.

«Атăл хĕрринчи юман» йĕкелĕнчен чăваш литературинче патвар юман шăтнă, вăл ӳссех, ҫитĕнсех пынă, пĕлĕте перĕнекен пулнă.

Эпир ун ҫине пăхатпăр та: чăваш поэзийĕн улăпĕ, тетпĕр.

**1 е. п.** 2007 ҫулта Петĕр Хусанкай ҫуралнăранпа 100 ҫул ҫитет. Кун иртет, ҫул иртет, – унăн сăввисен хăвачĕ чакма мар, вăхăт шунăҫемĕн ӳссе пырать. Пурнăҫ кĕске – искусство ĕмĕрлĕх, тенĕ аслисем. П. Хусанкай сăввисем те ĕмĕрлĕхе. Унăн пĕтĕм пултарулăхĕ – чăваш пурнăҫĕн кĕнеки. Поэт – тăван халăхăн чысĕпе чапĕ. Ҫавăнпа ĕнтĕ вăл ҫуралнă кун – чăваш халăхĕшĕн пысăк уяв.

Петĕр Хусанкай – телейлĕ ҫын. Вăл хăйĕн ҫутă тĕнчери парăмне татса кайнă, – чăваш халăх асĕнче ĕмĕре юлнă. Поэт сăнĕ тĕп хула варринче ларать, вăл палăк инҫетрен курăнать. Унăн ячĕ пысăк керменпе аслă урама илем парать. Пин-пин сăвви халăхра упранать, таҫта-таҫта уҫҫăн янăрать.

Шанас килет, чăваш халăхĕн чаплă ывăлĕ ҫырнă сăмахсене паянхи ăру асрах тытса пурăнĕ.

*(П. Хусанкайăн «Ҫамрăк чăваш поэчĕсене каланă сăмах» сăввине грампластинкăпа итлеттерсен ытлашши пулмĕ, поэт хăй вулать).*

## ЛИТЕРАТУРА

### Кĕнекесем


1. Айги, Г. Сăвăсем поэмăсем / Г. Айги. – Шупашкар, 1994. – С. 119-120.
2. Дедушкин, Н. Пурнăҫ илемĕпе хавхаланса / Н. Дедушкин. – Шупашкар, 1988. – С. 33-52.
3. Долгов, В. Ырă сăнарсен илемĕ / В. Долгов. – Шупашкар, 1978. – С. 53-66.
4. Иванов, Н. И. Чăваш халăх сăвăҫи П. Хусанкай / Н. И. Иванов. – Шупашкар, 1978. – 64 с.
5. Кузнецов, И. Саманапа литература / И. Кузнецов. – Шупашкар, 1977. – С. 117-124.
6. Манăҫми Хусанкай : асаилӳсем. – Шупашкар, 1987. – 304 с.
7. Хусанкай, П. П. Ҫырнисен пуххи / П. П. Хусанкай. – Шупашкар, 1997. – 544 с.
8. Чечеклен ҫĕршыв. – Шупашкар, 1969. – С. 37.
9. Эсхель, А. Вăхăт таппи : ҫулсем, ҫынсем, сăнсем / А. Эсхель. – Шупашкар, 1982. – С. 81-82.


### Статьясем


10. Артемьев, Ю. «Ман тĕлтен ҫанталăк ҫурма ҫутă» / Ю. Артемьев // Хыпар. – 1997. – 29 июль. – С. 3.
11. Галкин, А. Асăмри аслă юлташăм / А. Галкин // Ялав. – 1997. – № 1-2. – С. 129.
12. Давыдов-Анатри, В. Хусанкай ҫинчен хунă юрă / В. Давыдов-Анатри // Ялав. – 1999. – № 10. – С. 85.
13. Иванов, Н. Петĕр Хусанкай юррисем / Н. Иванов // Ҫилҫунат. – 1999. – № 7-8. – С. 44-45.
14. Иванов, Н. Яла кайсассăн... / Н. Иванов // Ялав. – 1997. – № 8. – С. 108-111.
15. Игнатьев, В. Асран кайми самантсем / В. Игнатьев // Хыпар. – 1998. – 18 ҫурла. – С. 4.
16. Изоркин, А. Йĕп вĕҫĕ ҫинчи шăпа : тĕрме е ирĕк? / А. Изоркин // Хыпар. – 1997. – 18 пуш.
17. Кузьмина, В. «Унпа пурăннă чух пурнăҫ пахарах, туллирех пулнă» / В. Кузьмина // Хыпар. – 1997. – 18 кăрлач
18. Митта, В. П. Хусанкай патне янă ҫыру / В. П. Митта // Ялав. – 1998. – № 3. – С. 91-92.
19. Мокин, А. Петĕр Хусанкая чысласа / А. Мокин // Хресчен сасси. – 2000. – 28 сентябрь.
20. Николаев, А. Шутсăр тимлĕ Хусанкай / А. Николаев // Чăваш ен. – 1997. – 20 раштав. – С. 5.
21. Паттăр ĕҫĕ // Иванов Н. Поэт сипечĕ. – Шупашкар, 1982. – С. 85-108.

22. Петров, Н. Болгари писателĕпе Ангел Тодоровпа тĕл пулни / Н. Петров // Тăван Атăл. – 1998. – № 9-10. – С. 66-67.
23. Прокопьев, И. Вилĕмсĕр поэт халалĕ / И. Прокопьев // Ялав. – 1995. – № 9.
24. Сăпка юрри // Чăваш хĕрарăмĕ. – 1998. – 19 раштав. – С. 5.
25. Тимбай, А. Сăпка юрри / А. Тимбай // Хыпар. – 1998. – 24 кăрлач. – С. 7.
26. Федоров, Н. В. Хусанкай поэзийĕ ĕмĕрлĕхе / Н. В. Федоров // Хыпар. – 1997. – 23 кăрлач.
27. Цыфаркин, В. Поэт ҫĕршывĕ / В. Цыфаркин // Чăваш ен. – 1997. – 1-8 март. – С. 6.
28. Чекушкин, В. Мехел ҫитсен / В. Чекушкин // Ялав. – 1997. – № 1-2. – С. 122-126.
29. Хусанкай М. Ваҫлей патне янă ҫырусем. «Канăҫсăр ман сассăм – самана сассиччĕ...» // Хыпар. – 1997. – 22 кăрлач. – С. 11-12. – («Хыпар» кĕнеки ; № 21).
30. Юмарт, В. Эп пăртак чăваш ятне ҫĕклесшĕн / В. Юмарт // Тăван Атăл. – 1997. – № 1. – С. 1-13.
31. Ялавин, С. Хусанкай / С. Ялавин // Тăван Атăл. – 1998. – № 3-6. – С. 67-69.

* * *

32. Анчиков Г. Ҫĕршывăмҫăм / Сл. П. Хусанкая // Шупашкар парни. – Л.: Мелодия, 1990. – 1 ГПР [ГОСТ 5289-88]: 33 об/м СТЕРЕО – с 30 29935 009.
33. Петр Хузангай читает свои стихи. – Л.: Мелодия, 1990. – 1 ГПР [ГОСТ 5289-73].